26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 3 ШАМАТКУН 72(6309) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпулăн пысăк тухăçлăхĕшĕн

Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕççынни-сен тĕп тĕллевĕ—кăçал пысăкрах тухăçлă тырпул туса илесси, нумайрах тырпул туса илсе фронтпа çĕршыва пысăк пулăшу парасси пулмалла. Пур культурăсен тухăçлăхне те вăйлăн ÿстересси колхозсен, çĕрĕç органĕсемпе машинно-тракторнăй станцисен 1943 çулти тĕп задачи пулса тăрать.

Тырпул тухăçлăхĕн никĕсне çураки вăхăтĕнче хывса хăвармалла. Тухăçлă тырпул ÿстерме паха вăрлăхсем акас пулать, вырăнти удобренисене ытларах пухса уя тăкмалла, акана малта пыракан агротехника хушнă пек тумалла.

Иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсем тырра агротехника кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçламасăр акни палăрчĕ. Хăшпĕр колхозсенче агротехника кăтартăвĕсене пурнăçлассишĕн пачах тăрăшманни те пулчĕ. Çакăн пек йăнăшсем кăçал пачах пулмалла мар. Агротехникăна хакламасăр тăни, çурхи тырăсем акмалли плана тултарассишĕн çеç тăрăшни, ĕçе кирлĕ пек тĕплĕн туманни пулмалла мар. Тырпулăн тухăçлăхĕшĕн кĕрешесси чи малти вырăнта пулмалла. Кашни культурăна вăл ăçта лайăх ÿсме пултарнине шута илсе лайăх акса хăвармалла, ăна тухăçлăн ÿсме кирлĕ удобрение вăхăтра памалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ „Государствăн 1913 çулти ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен" йышăннă постановленире агрономи мероприятийĕсен конкретлă программине кăтартса панă. Вăл мероприятисен тĕп тĕллевĕ—тырра агротехника енчен чи лайăх срокра, тăпра нÿрĕлĕхне нумай тытса хăварнипе, çумкурăкĕсене лайăхрах пĕтерсе сухаланипе акса хăварасси. Вăрçă вăхăтĕнче çакăншăн уйрăмах хытă тăрăшни кирлĕ. Кашни колхозăн условийĕсене уйрăмăн шута илсе, нумайрах тырпул туса илме май паракан агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе колхозниксен тата агрономсен пуçарăвĕ тата ответлăхĕ ÿссе пымалла.

Çураки вăхăтĕнче агротехникăн тĕрлĕ майĕсемпе пур колхозсем те пĕр пек усă курма пултараймаççĕ. Агротехника мероприятийĕсемпе вырăнти опыт кăтартнă пек усă курмалла.

Кашни çулах çуркунне хăйне майлă килет. Час-часах çуркуннехи уйхир ĕçĕсене япăх çанталăкра ирттермелле килсе тухать. Çакăнта вара агрономсен вăйлă ĕçлеме кирлĕ. Вĕсен хăçан тата мĕнле акмаллине кăтартса памалла. Кăтартусене агрономи науки тăрăх тата çанталăка шута илсе памалла. Çавăнпа та колхоз правленийĕсен акана тухмалли вăхăта сăнаса тăмалла, колхозри ĕç опытне тата агрономăн кăтартăвĕсене шута илсе, ĕçе пĕр иккĕленсе тăмасăр хăварт пуçăнмалла.

Райçĕрĕç пайĕсен колхозсене акатума тытăнас енĕпе кăтартусем панă чухне кашни колхоза уйрăмăн илсе пăхмалла. Пур колхозсемшĕн те пĕр пек кăтарту пулма пултараймасть, çавăн пекех уйрăм культурăсене те хăçан акмаллине пĕлни кирлĕ. Çурхи ĕçсене агротехника кăтартнă срокра тата агротехникăллă мероприятисене тĕплĕн пурнăçланипе туса ирттерсен çеç пирĕн колхозсем 1943 çулта вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пысăк тухăçлă тырпул ÿстерме пултарĕç.

Чылай районсенче агрономсен йышĕ сахалланчĕ. Колхозсенчи агрономсем халь нихăçанхи пек мар хĕрÿллĕн ĕçлени кирлĕ. Вĕсем пур çĕрте те пулмалла, агроном ертсе пыни кашни колхозрах палăрмалла, агроном хăй тавра колхоз активне, опытлă колхозниксене пĕтĕçтермелле.

Уйхир ĕçĕсем кăçал вăрçă пынă йывăр вăхăтра пулса иртеççĕ. Йывăрлăхсем сахал мар пулаççĕ, анчах ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕççыннисене тĕрĕс вырнаçтарса тухса, ырми-канми ĕçлесе йывăрлăхсене çĕнтермелле.

Çуракине кĕске срокра, лайăх сухаласа акса, ĕçри опытпа анлăн усă курса, агротехника ыйтăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырса, орденлă Чăваш республикинчи колхозсем 1943 çулăн тĕп задачине ăнăçлăн татса парĕç, пур йышши тырăсене те пысăк тухăçлăхпа туса илĕç.

Танксен „ЭССР" ятлă колоннине тума

Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ эстонецсем Октябрьски районри колхозсенче концертсем параççĕ.

Район центрĕнче панă концерт хыççăн пухнă 950 тенкĕ укçана бригада танксен „ЭССР" ятлă колоннине тунă çĕре хывре.

Хатасский.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлгерÿ

Апрелĕн 1-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Мартăн 31-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груззсем турттарса пыракан 70 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерипе минометсен 6 батарейине пусарнă, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă тата тăшманăн катерне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем тăшман оборонин малти хĕррине шăтарса кĕнĕ те нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Пирĕн артиллеристсем пехотăна пулăшса пырса, тăшман миномечĕсен 4 батарейине тата артиллерин 8 батарейине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем çапла каласа пĕлтернĕ: нимĕçсен 267-мĕш дивизийĕнчи нумай подразделенисенче юлашки çапăçусенче çын йышĕн 70—80 проценчĕ вилнĕ е аманнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пăшалсемпе пулеметсенчен сайра персе тăнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем ăнăçлă маневр туса илсе, тĕреклетнĕ пĕр пунктра нимĕç гарнизонне хупăрласа илме пуçланă. Совет боецĕсем пыра-пыра çапнипе пула гитлеровецсем васкаса каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 150 виллине çити выртса юлнă. Пирĕн подразделенисем çав тĕреклетнĕ пункта йышăннă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче пирĕн войскăсем оборона ĕçĕсене туса пынă тата тăшмана хирĕç персе тăнă. Пĕр соединенин участокĕнче пирĕн минометчиксем тата снайперсем персе тăнипе нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пырса малаллла куçнă тата халăх пуранакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсен пĕр батальонне аркатса тăкнă тата 5 оруди, 19 пулемет, 8 миномет, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 13 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Севск районĕнче тăшман пехотин пĕр батальонĕ тата 7 танк пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсем малтанлăха пирĕн боевой хурала пăртак хĕссе халăх пуранакан пĕр пунктăн хĕвеланăç енне пырса кĕме пултарнă. Пĕр чаçăн боецĕсем хирĕç пырса çапса тăшмана ывăтса янă та 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Старцев юлташ командир пулса ертсе пыракан пĕр чаçри снайперсем пĕр кун хушшинче 37 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград патĕнче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне пĕтерсе тăкнă. Сержант Дмитриев юлташ зенитнăй пулеметран персе тăшманăн «Мессершмитт — 109» истребительне ÿкернĕ.

* * *

Кировоград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пуранакан пĕр пункта пырса кĕнĕ те юсав мастерскойне хуралакан 37 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем нимĕçсен юсаса лартнă автомашинисен тата запаслă чаçсен складне пĕтерсе тăкнă. Партизан-подрывниксен ушкăнĕ чугунçул линийĕ çине минăсем лартса тухнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе тăшман эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Паровоз тата тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 23 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Волхов фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен 23-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 9-мĕш полкри Иоганн Хейдер тата Курт Кун салтаксем тыткăна лекнĕ. Вĕсен аллинче Германирен килнĕ 48 çыру пулнă. Вăл çырусене вĕсем полевой почтăран хăйсен ротинчи салтаксем патне илсе кайнă пулнă. Çав çырусенчен акă мĕн курăнать: гитлеровецсем туса ирттерекен тотальнăй мобилизаци Германи халăхне кÿрентерсе питĕ кăмăлсăрлатнă.

Бранденбург хулинчен Вильгельм Хут салтак патне Экгард çапла çырать: «...мана армие илеççĕ. Пĕрин хыççăн теприне Россия пирĕн дивизисене тата маршевой батальонсене ним шутсăр çăтса пырать. Вăл халлĕхе тылра пурăннисене пурне те çавăн пекех çăтса ярĕ. Çакăн пек формăллă тотальнăй вăрçа кĕске вăхăт хушши кăна туса пыма пулать, — пирĕн хуçалăх кĕç-вĕçех тата яланлăхах ишĕлсе анĕ». Фриц Штарбек хăйĕн пиччĕшĕ патне çапла çырать: «...Карла та часах зенитчик пулма илĕç. Тунтикун 6-мĕшпе 7-мĕш классенче вĕренекен ачасене пухрĕç. Вĕсене салтаксем пекех тытаççĕ. Вĕсем форма тăхăннă. Шухăшласа пăх-ха, пирĕн пурнăçа ачасен аллине параççĕ. Вĕсем пире англичансем сывлăшран килсе тапăнассинчен хÿтĕлемелле иккен. Опытлă ватă зенитчиксене Российăна яраççĕ, вĕсен унта пехотинецсем пулса çапăçмалла пулать». Герберг Ганский Торнран Карл Ланге салтака çапла пĕлтерет: «Пирĕн кунта пурте пуçĕсене çухатнă. Пурне те армие илеççĕ. Халĕ чăлахсем те юрăхлă пулчĕç».

Альфред Отто салтак патне Берлинри унăн тăванĕсем çапла çыраççĕ: «Вăрçă пире тем пекех йăлăхтарчĕ. Темиçе хут çав тери пысăк çĕнтерÿсем çинчен тĕлĕнтерсе пĕлтернĕ хыççăн пурте вăрçă часах пĕтет пулĕ тесе шутлатчĕç. Ун вырăнне эпир хамăра тотальнăй мобилизаци тунипе тав тума пултаратпăр. Çук, чи хăрушă вĕçленес пулсан та, вĕçлентĕрех ку вăрçă. Хăрушă вĕçленни те таттисĕр тăсăлакан хăрушлăхран лайăхрах пулĕ».

Апрелĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата разведка тунă. Пĕр чаçăн боецĕсем противникăн контратакине сирсе янă, нимĕçсен пехотин пĕр ротине яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем çĕрле хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма хăтланса пăхнă. Старши лейтенант Дружинин ертсе пыракан пирĕн боецсен ушкăнĕ нимĕçсене пăшалсемпе пулеметсенчен персе кĕпсе илнĕ. Противник каялла чакнă, пралук картасем патĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 60 виллине пăрахса хăварнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн пĕр часть, противника хирĕç кĕрешсе, нимĕçсен 200 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Икĕ противотанковăй оруди, 7 пулемет, 2 миномет тата снарядсемпе минăсем тиенĕ 6 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Донец шывĕн вăтаçĕрти районĕнче пирĕн войскăсем противникпа артиллерирен, пăшалсемпе пулеметсенчен хирĕ-хирĕç персе тăнă. Пĕр соединенин чаçĕсем противникăн пехотин атакине сирсе янă, çав çапăçура нимĕçсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллерирен персе противникăн 7 дзотне аркатнă, боеприпассен складне сирпĕтсе янă тата минометсен 6 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Кубаньре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пуранакан 3 пункта тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем ĕнер кăнтăрла противникăн пирĕн пĕр объект çине бомбăсем пăрахма хăтланнă авиацине хирĕç сывлăшра çапăçнă. Çав çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне зенитнăй артиллерирен персе 3 самолета ÿкернĕ тата нимĕçсен 3 бомбардировщикне çĕмĕрнĕ. Çапла вара пĕтĕмпе противникăн 9 самолетне пĕтерсе тăкнă, 3 самолетне çĕмĕрнĕ. Çав çапăçура пирĕн авиацин çухатусем пулман.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ, нимĕçсен карательнăй экспедицине хирĕç çапăçса, темиçе вуншар гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Ленинград облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ противникăн чугунçул çинчи эшелонне тÿнтерсе янă. Паровоз тата çар пурлăхĕ тиенĕ 16 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен 267-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 487-мĕш полкри салтаксен ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтак Генрих Фине, обер-ефрейтор Вернер Дунклер, фельдфебель Альберт Пеплау çапла каласа панă: «Эпир Большая Каменка ялĕнче оборона йышăнса тăраттăмăрччĕ. 6-мĕш ротăна кирек мĕнле пулсан та позицие сыхласа хăварма приказ пачĕç. Анчах эпир тÿссе тăраймарăмăр, вырăссем яла кĕрсе кайрĕç те ăна йышăнчĕç. Пĕр кун хушшинче кăна пирĕн ротăра 75 çын вилчĕ. 1, 2, 5 тата 7-мĕш ротăсем татах та пысăкрах çухатусем тÿсрĕç. Рота командирĕсем — лейтенантсем Штеменг тата Гофман, обер-лейтенант Гаупнер тата ыттисем те вилчĕç. 6-мĕш ротăра офицерсем пурте стройран тухрĕç. 487-мĕш полкăн нумай подразделенийĕсем пĕтсе ларчĕç». Çав полкри 7-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Курт Гейнерт çапла каланă: «Паулюс çарне Сталинград патĕнче çĕмĕрсе тăкни çинчен салтаксем пĕрмаях калаçаççĕ. Нимĕçсен 6-мĕш çарĕ Сталинград патĕнче лекнĕ лару-тăрувах кĕрсе ÿкес марччĕ тесе, салтаксем халĕ хăраççĕ».

* * *

Магдебург (Германия) сывăхĕнчи 2 заводра продукцие йышăнакан çар комиссийĕ 45 вăтам танка тата 68 зенитнăй орудие бракланă. Комисси çак юрăхсăр техникăпа тимĕр-тăмăр вырăнĕнче усă курма хушнă. Çав предприятисенче ĕçлекен бельгиецсене, французсене тата итальянецсене гестаповецсем чылайĕшне арестленĕ. Темиçе кун иртсен ютçĕршывран килнĕ 86 рабочи заводсенчен тухса тарнă. Тухса тарас умĕн вĕсем хăйсен станокĕсене пăсса хăварнă.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

Сирĕн историллĕ докладпа тата Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынипе хавхаланса, медицина работникĕсемшĕн партипе правительство çав тери хытă тăрăшни çине ответлесе, Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă республикинчи медработниксем танксен «Медработник Чувашии» ятлă колоннине тума 750 пин тенкĕ укçа пухса банка хыврĕç. Укçа пухасси малалла пулса пырать. Чăваш республикинчи медработниксем тылра санитари ĕçне лайăхлатассишĕн, аманнă боецсемпе командирсене каялла строя хăвăртрах тавăрассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме сăмах параççĕ.

МЕДСАНТРУД СОЮЗĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ГРАЧЕВА.

Шупашкар, Медсантруд союзĕн Чăваш Обкомĕн председательне ГРАЧЕВА юлташа

Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă республикинчи медицина работникĕсене, танксен «Медработник Чувашии» ятлă колоннине тума 750 пин тенкĕ пухнăскерсене, — манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

КЛЕВЕР АКАÇÇĔ

КÿКЕÇ, апрелĕн 2-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем кăçалхи çуракине туса ирттерме хатĕрленсе çитнине пăхса тухма тытăнчĕç. Районри партипе совет тата комсомол активĕ колхозсене кайрĕ. Вĕсем вырăнти активпа пĕрле колхозсем акана тухма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме массăна мобилизацилеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех районри хăшпĕр колхозсем участоксене уйрăмăн суйласа илсе клевер акма тытăнчĕç. Кÿкеç ялсоветĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан тата Тулик Хураски ялсоветĕнчи «Челюскин» колхозсем уйрăм вырăнсене суйласа илсе 15 гектар клевер акрĕç.

Л. Данилов,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Укерчĕк çинче: пирĕн земляксем —старши сержант **И. Т. Миметов** (сулахайра) тата **Ф. К. Шатров** (сылтăмра). Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче хастарлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн И. Т. Миметов юлташа **Хĕрлĕ çăлтăр** орденĕпе, Ф. К. Шатров юлташа — Хĕрлĕ Çăлтăр тата **Хĕрлĕ Ялав** орденĕсемпе наградăланă.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Вăрлăх уйăрса çитермен

СĔНТЕР, апрелĕн 2-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Çуракине хатĕрленнине пăхса тухнă хыççăн, Пашалукасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче пысăк çитменлĕхсем палăрчĕç. «Красный Октябрь» колхозра çурхи тырăсен вăрлăхĕсене уйăрса çитермен. Çурхи тулă вăрлăхĕ 25 центнер çитмест. Сĕлĕ хунă кĕлете юр кĕрсе тулнă. Кÿлмелли лашасем 50, çураки тума туртăм вăйĕ çителĕклĕ, анчах кÿлмелли хатĕрсем çитмеççĕ. 22 лашана кÿлме йĕвенсем, 18 лаша валли тилхепесем çук тата пĕкĕсем те çителĕклĕ мар.

Çавăн пекех ялсоветри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз та çуракине хатĕрленсе çитмен, кунта вăрлăхсене сортлас ĕç кая юлса пырать.

М. Исаев.

Подсобнăй хуçалăх çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленет

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Леспродторгри подсобнăй хуçалăх иртнĕ çулта 28 гектар çинчен пахча-çимĕçсем пухса илнĕ. Подсобнăй хуçалăх туса илнĕ çимĕçсем общесвăллă столовăйсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк пулăшу панă. Çавна шута илсе, кăçал хуçалăхра акмалли çĕр лаптăкне тата 5,5 гектар пысăклатма палăртнă.

Подсобнăй хуçалăхра ĕçлекенсем халь çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленеççĕ. 20 центнер сĕлĕ, 3 центнер пăрçа тата 20 килограмм вир вăрлăхĕсене лайăх тасатса кондицие çитерсе хунă. Кунсăр пуçне 3 килограмм хăяр, 3 килограмм кишĕр, 3 килограмм кăшман вăрри, 1 килограмм купăста вăрри, 150 центнер çĕрулми тата çĕрулми тăррисене 200 килограмм ытла каснă.

Хуçалăхăн çуракине ăнăçлăн ирттерме лашасем çителĕклĕ, ялхуçалăх инвентарьне юсаса çитернĕ, ĕç вăйĕ те кирлĕ чухлех пулать.

Х. Лисин.

Правительство постановленине пурнăçа кĕртессишĕн

КАНАШ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Вырăскас Пикшихри «Мотор» колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен» йышăннă постановлениене сÿтсе-явнă хыççăн ăна пурнăçа кĕртес тесе татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç.

Колхозниксем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа çĕр пăт тырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Паянхи куна уя 4.200 лав тислĕк кăларнă, 540 лав фекали пухнă, 15 тонна фосфорит çăнăхĕ кÿрсе килнĕ.

Колхоз çуракине хатĕрленсе 20 сÿре, 3 сÿсмен, 7 ĕнерчĕк, 15 тилхепе, 130 урхалăх çĕнĕрен тутарнă. Вăрлăхсем çителĕклĕ тата вĕсем пурте паха кондициллĕ. Кÿршĕри «Красный Октябрь» колхоза кивçенле 90 центнер тулă, 35 центнер пăрçа, «Молния» колхоза 20 центнер тулă парса пулăшнă.

Çураки вăхăтĕнче столовăй уçма хатĕрленеççĕ. Çакна валли 30 пăт кĕрпе, 50 пăт ытла çăнăх, 123 килограмм тăварланă какай хатĕрлесе хунă

В. Веселов.

Колхоз çуракине тухма хатĕр

ШАХАСАН. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсем май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çуракине тĕплĕн туса ирттерме тăрăшаççĕ. Хĕллех колхоз 400 центнер кĕл, 336 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 5 тонна минераллă удобренисем хатĕрленĕ, уя 4.200 лав тислĕк кăларнă. Хăй валли вăрлăх хатĕрлесе хунă хыççăн колхоз кÿршĕри колхоза 335 центнер вăрлăх парса пулăшрĕ.

Çураки туса ирттерме ĕç планĕ тунă. План тăрăх колхоз çурхи ĕçсене 7 талăк хушшинче туса ирттермелле. Хăш колхозник ăçта ĕçлемеллине палăртса хунă: 41 çын суха тумалла, 18 çын сÿрепе сÿрелемелле, 3 çын сеялкăпа кулленех тырă акмалла.

Акнă вăхăтра уя вăрлăх турттарма 16 лаша уйăрнă, вĕсем çумне хĕрарăмсене çирĕплетнĕ.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи научно-технически советăн ларăвĕ

Апрелĕн 1-мĕшĕнче ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи научно-технически советăн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларăва ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ, научно-технически советăн председателĕ А. Матвеев юлташ ертсе пычĕ.

Совет председателĕн заместителĕсем пулма лару ЧАССР Совнарком председателĕн заместительне Чернов юлташа тата ялхуçалăх институчĕн директор заместительне Герасимович юлташа суйларĕ. Советăн научнăй секретарĕ пулма ялхуçалăх институчĕн доцентне Тураев юлташа суйларĕç.

Ларура научно-технически совет çинчен калакан положение тата советăн 1943 çулхи ĕç планне çирĕплетрĕç.

Ялхуçалăх институчĕн профессорĕ Замятин юлташ выльăх-чĕрлĕхе суйласа илсе ĕрчетесси çинчен доклад туса пачĕ.

Мексика посланникĕ Л. Кинтанийа господин СССР-а килсе çитни

Кăçалхи мартăн 31-мĕшĕнче Куйбышев хулине Мексикăн СССР-ти чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ Луис Кинтанийа господин килсе çитнĕ.

Аэродром çинче Л. Кинтанийа г-на Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Америка çĕршывĕсен пайĕн заведующин заместителĕ Д. С. Чубахин юлташ тата НКИД-ăн протоколсен пайĕнчен Г. И. Фомин юлташ кĕтсе илнĕ.

Районри хаçатсене пăхса тухни

РЕДАКТОРА ХУТ ПĔЛНИ КИРЛĔ

Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат редакторĕ П. Васильев — çĕнĕ çын. Çĕнĕ ĕçри малтанхи утăмсенче йăнăшсем пулма пултараççĕ. Çавăнпа Васильев юлташ кăларнă хаçатăн пĕрремĕш номерĕсенчи грамматика йăнăшĕсене вулакан каçарнă та пулĕ. Анчах çĕнĕ редактор ĕçлеме пуçлани икĕ уйăх та иртет, йăнăшсем унăн хаçатĕнче çаплах пĕтмеççĕ-ха. Уйрăм номерсенче орфографи тĕлĕшпе 50—70 йăнăш таран пулать. Тĕслĕхрен, хаçатăн 9-мĕш номерĕнче 78 йăнăш, 11—19-мĕш номерсенче 47—51 йăнăш кайнă. Вулакана çакă вăл йăлăхтарма пуçлать ĕнтĕ.

Йăнăш пулма пултарать, анчах вăл пулма тивĕçлĕ мар. Тата, чи малтан, редактора хут пĕлни кирлĕ. Хаçат чĕлхи уçăмлă та витĕмлĕ пулмалла. Унсăрăн вăл коллективлă организатор, лайăх агитатор пулма пултараймасть.

«Вăйлă тырпулшăн» хаçатăн 19-мĕш номерĕнчи «Вăрман касса турттарас плана хăвăрт тултарассишĕн» ятлă статьяра çапла çырнă:

«Чăваш АССР Совнаркомĕпе Чăваш Обкомĕн бюровĕн вăрман касса турттарас плана вĕçлес тĕлĕшпе мартăн 1-мĕшпе 15-мĕшĕнчен фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕх ирттерме йышăнса вăрмана çурран тата лашапа ĕçлеме масăллăн кăларма хушрĕç».

Çав статьярах малалла: «Обкомпа Совнарком фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕхе мартăн 25-мĕшĕнчен чăсма йышăнчĕç» тесе çырнă.

Пыр та ăнлан мĕн калас тенине! Хаçата çырнă тăрăх, Совнаркомпа Обком бюровĕн вăрман касса турттарас плана вĕçлемелле пек тата икэрнелĕхе мартăн 25-мĕшĕнчен малалла чăсмалла пек пулса тухать.

Кун пек йăнăшсем чылай. Редакци çын ячĕсене, хушамачĕсене вĕçĕмсĕр пăтратать. Калинин вырăнне Налинин, Матвеева вырăне Матвеев, Ижутов вырăнне Ижудов т. ыт. те.

Корректура йăнăшĕсем, саспаллисене пуç-хĕрлĕ лартса янисем — кашни номертех. Вăхăтĕнче вырăнне хăхăтĕнче, хушшинче — хушинче, хушшиче, пымасть — пымась, бригадирĕ—бргадирĕ, лейтенант—лейтенанг, фуражлă — фурашлă, совет — созет тата ытти те. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене татса куçарнă чухне вара редакци нимĕнле чĕлхе законĕсене те пăхăнмасть. Темиçе сăмаха ушкăнпа пĕрлештерсе çырасси те тек-текех пулса пырать. «Вăтамшутпагектартан», «чĕрлĕхĕрчетесĕçрера», «курссеммобилизацилемелле» т. ыт. те.

Чăвашла çырма май пур сăмахсенех хаçат вырăсла çырать: канашлу вырăнне — совещани, çав вăхăтрах канашлу та тесе çырать, япаласем вырăнне — издели.

Тепĕр чухне хаçат паллă документсене хăй ирĕкĕпех кĕскетсе пичетлет, анчах кун пирки вулакансене редакци енчен нимĕн те асăрхаттармасть. Сăмахран, Мари АССР-пе пыракан социализмлă ăмăртура Чăваш республики хăй çине илнĕ обязательствăсенче шăп 23 йĕрке сиктерсе хăварнă. Шăхасан районĕн обязательствисенче пунктсене пăтраштарса пĕтернĕ: 12-мĕш вырăнне — 21-мĕш пункт лартнă.

Çавăн пекех редакци хаçатри материалсене тĕрĕс вырнаçтарса тухассишĕн те тăрăшмасть. Материалсене ăçта май килнĕ çавăнта чиксе хураççĕ. Сăмахран, укçа-тенкĕ мĕнле пухса пынине кăтартакан сводкăна «Фашистсен Белоруссири террорĕ» ятлă материал варринех кĕртсе лартнă. Тата ăна нимĕнпе те уйăрман. Вулаканăн вара çапла вуласа кайма лекет: «Филип Шиловича укçа-тенкĕ пухассин 1-мĕш квартал планне»... Тепĕр чухне подваллă статьясем варринех «ютçĕршывсенче» текен материалсем ана-ана лараççĕ.

«Вăйлă тырпулшăн» хаçат номерĕсене пăхса тухнă хыççăн çакăн пек шухăш татах та ытларах çирĕпленет: «Тепле пулсан та, редактора хут пĕлни кирлĕ».

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ

Мартăн 28-мĕшĕнче Сĕнтĕр районĕнчи коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Г. Гусев юлташ доклад туса пачĕ.

1942 çулта районра ВКП(б) членĕн кандидатне 36 çынна, ВКП(б) членне 19 çынна илнĕ. 1943 çулта мартăн 25-мĕшне çитиччен ВКП(б) ретне пĕтĕмпе 24 çынна илнĕ. Парти ретне ÿстерес ĕç районра çапах та çителĕксĕр пулса пырать-ха. Уйрăмах Хураçкари, Муркашри, Кăпасри, Ахманейри территориллĕ парторганизацисем тата «Новая Юнга» колхозри пуçламĕш парторганизаци çак енĕпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вăл организацисенче 1943 çулта парти ретне пĕр çынна та илмен.

Пуçламĕш парторганизацисем ВКП(б) членĕн кандидачĕсемпе пачах ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та ВКП(б) членĕн кандидачĕсен 24 проценчĕн кандидатра тăмалли срокĕ иртсе кайнă.

ВКП(б) ретне илнĕ çынсене партдокументсем вăхăтра паманни те пулнă. 1942 çулти февралĕн 27-мĕшĕнче ВКП(б) райкомĕ М. Н. Михайлов юлташа ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ, анчах кандидат карточкине ăна сентябрь уйăхĕнче кăна панă.

Районри чылай колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнĕ, анчах ку ĕç çителĕклĕ пырать теме çук-ха.

Пухура доклад тăрăх 18 çын тухса каларĕç. Пренире ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийин заместителĕ Митрофанова юлташ сăмах каларĕ. Вăл МТС ĕçне хытă критиклерĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçламалли конкретнăй мероприятисене палăртса хăварчĕ.

М. Исаев.

Комсомол ретне ÿстеретпĕр

ВАРМАР. Тăван Хĕрлĕ-Çар паттăррăн çапăçнипе тата Сталин юлташ чĕннипе хавхаланса, колхоз çамрăкĕсем ĕçри хастарлăха ытларах та ытларах ÿстереççĕ.

Çак кунсенче комсомолăн Хоруйĕнчи «Пионер» колхозри организацийĕ 3 çамрăка комсомол ретне илчĕ. Вĕсенчен пĕри 1926 çулта çуралнă А. Слепышев. Вăл эвакуаци йĕркипе иртнĕ çулта Чăваш республикине куçса килсен çеç туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ. Слепышев юлташ çуллахи вăхăтра трактористсемпе пĕрле плугарь пулса ĕçлерĕ, 200 ĕçкунĕ турĕ. Хăйĕн ĕçне вăл тимлĕн туса пычĕ, трактор ĕçне вĕренсе çитрĕ.

— Ленинла комсомол членĕн ятне эпĕ чыслăн тытса пыма пулатăп. Хамăн политикăллă пĕлĕве ÿстернипе пĕрлех производствăра стахановла ĕçлеме, хамăр çĕршыва пулăшассишĕн ытларах тăрăшма пулатăп, — тет Слепышев юлташ.

Кунсăр пуçне комсомол ретне М. Лаврентьева илнĕ. Вăл колхозра письмоносец пулса ĕçлет. Хăйне шанса панă ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек пурнăçласа пырать.

А. Иванов.

ФРОНТА ПУЛĂШМА

КАЛИНИНО. Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхоз колхозникĕсем фронтпа тăван çĕршыва пулăшма 25 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса хыврĕç, вăл шутран Е. Востряков, З. Денисова, Н. Власов колхозниксем 100—800-шер тенкĕлĕх хыврĕç. Çак ĕçре коммунист В. Быков юлташ тăрăшса ĕçлерĕ.

Бор. Шорников.

ХУЛАНА ТАСАТАССИ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

Хулана тасамарлăхсемпе çÿп-çапсенчен тасатасси ăнăçлăн малалла пырать. Кашни кунах нумай урамсем, çуртсем тасатăççĕ. Юлашки икĕ кун хушшинче кăна 177 картишне тасатса çитерни. Юлашки пилĕк кун хушшинче пĕтĕмпе 600 картишне тасатнă.

Анчах пур предприятисемпе учрежденисем тата пур комендантсем те ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха. Сăмахран, 10-мĕш номерлĕ пекарня руководителĕ Крантов юлташ, иккĕмĕш хут асăрхаттарнă пулин те, пекарьнăпа ун килкартишне тасатас пирки нимĕн те туман. Çакăншăн ăна 100 тенкĕ штраф тÿлеттермелле тунă. Пĕр заводăн пурăнмалли çурчĕн коменданчĕ пирки ĕçе прокуратурăна янă. Тепĕр заводăн столовăй заведующийĕ пирки уголовнăй ĕç пуçарса янă. Çавăн пекех предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем çÿп-çапсене турттарса тăкма машинăсемпе лашасем уйăрса памаççĕ пулсан, вĕсене çирĕп ответ тыттараççĕ.

Халăх усă куракан вырăнсене, картишсене çак кунсенчех тасатса çитермелле.

Пурте воскреснике тухар

Правительство комиссийĕ йышăннă тăрăх, Шупашкар хулине тасамарлăхсемпе çÿп-çапсенчен тасатас тĕлĕшпе апрелĕн 4-мĕшĕнче воскресник пулать.

Воскресникe хулари пур граждансем тата тасамарлăхсене турттарса тăкма пур предприятисемпе учрежденисен автомашинисем, лашасем хутшăнаççĕ.

Çак решение пăхăнман çынсене çирĕп ответ тыттараççĕ тата судпа айăплама пултараççĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

10. Ку—тавăру каçĕ мар-ха...

И если капитан Орлов
Летит в туманной мгле,
Его карающая тень
Проходит по земле.
Мих. Матуссовский.

Ирхине Информбюро пĕлтерчĕ
Çулăмлă кĕске хыпар фронтран.
Улăп пек тĕнче умне çĕкленчĕ
Николай Гастелло, капитан.

Çав хыпар Федот Орловшăн пулчĕ
Çурхи вăйлă аслати пекех.
Ун чĕри хаярлăхпала тулчĕ, —
Куççуле хаярлăх типĕтет.

Çапăçма чĕнет Гастелло ячĕ.
Ун кăварĕ — пирĕн чĕрере.
Орлов хăйĕн отрядне пуçтарчĕ:
— Тавăрма каятпăр кĕçĕрех!

Куçĕнче ун — пĕрмаях Гастелло,
Ун сăнарĕ, унăн ĕçĕсем.
Унăн пĕвĕ улăп пек хăй тĕллĕн
Ÿсĕнет чĕр шухăш ÿснĕçем.

...Халь кăначчĕ питĕ лăпкă каçчĕ,
Анчах ир арканчĕ ун чухне.
Капитан çав ир персе антарчĕ
Фашистсен пĕрремĕш çăханне

Ун чухне Гастеллăна каларĕç:
— Аллу çăмăл пултăр, капитан!
Эс пуçартăн тĕрĕс те хаяр ĕç,
Пирĕн çилĕ пырĕ санпа тан

Эс татах та чаплăрах ĕç турăн,
Вилĕмсĕр учитель, командир.
Сан ятна асра тытса, çатуррăн
Тăшмана аркатăпăр эпир.

— Хатĕрленĕр, бомба ан хĕрхенĕр! —
Орлов пачĕ отряда приказ. —
Фашистсемшĕн кĕçĕр çĕр кисрентĕр,
Тамăкри пек çунса тăтăр каç.

Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Виçĕ паттăр — виç самолетпа,
Тухса кайрĕç — командиршăн, тусшăн
Тăшмана пĕр шелсĕр аркатма.

Паттăрсем фронт урлă çул тытаççĕ.
Тÿперен пăхатăн та — çĕрле
Пирĕн чаплă хуласем çунаççĕ,
Вăрçă пĕтĕм тавраpа кĕрлет.

Ой, çĕршыв, сана эпир ÿстернĕ,
Пайгах тăкнă саншăн юнпа тар.
Килсе тапăнчĕ тĕнче эсрелĕ,
Нимĕç кÿчĕ вилĕм те пушар.

Улăпсем пек хуласем вилеççĕ,
Тăшманпа хаяррăн çапăçса.
Анчах пирĕн хуласен тивлечĕ
Ĕмĕр юлĕ çутă та таса.

Çав тивлетшĕн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн
Виличчен тăма сăмах парса,
Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Тухрĕç çакă çĕрлехи рейса.

Виçĕ тусăн, виçĕ капитанăн
Кăкăрта çунса тăрать пĕр ят.
Вăл Гастелло ячĕ — чĕр суранăн
Кашниннех чĕри çинче выртать.

Ак вĕсем тĕллев патне тухаççĕ
Аялтан чĕнмеççĕ халлĕхе.
Тăшман шăппăн пытанса юласшăн
Çĕре сăхса выртнă сĕлĕх пек.

Нумаях тÿсейĕн-ши эс, сĕлĕх,
Шарламасăр, —
Нимĕç нервине
Çиелтен тĕрĕслесе пĕлмелĕх
Орлов ярса пăхрĕ бомбине.

Çĕр чĕтренчĕ. Юрĕ, начар мар ĕç!
Мĕн хăтланăр-ха тепрер лексен?..
Ак хайхи йытла вĕрме пуçларĕç,
Вут хăсса, тăшман зениткисем.

Ме эппин татах! Пуçу кисрентĕр!
Нерву санăн курăпăр мĕнле!
Хыпашлать ак вун-вуник прожектор
Тÿпене тискер эрешменле.

Ялкăшать çĕрте халь ĕнтĕ çулăм,
Ялкăшаççĕ ориентирсем.
Вилĕм çеç ташлать ĕнтĕ хăюллăн
Тăшмана çĕрпе, вутпа ирсе.

Йĕркерен прожекторсем сÿнеççĕ,
Çутатать пушар çеç таврана.
Летчиксен хаяр та селĕм ĕçĕ
Ал лаппи çинчи пек курăнать.

Нимĕçсемшĕн çитрĕ тамăк каçĕ, —
Такăр çул сире леш тĕнчене.
Паттăрсем çÿлтен пăхса шутлаççĕ
Çулăм хыпнă самолетсене.

Хисеплеççĕ, татах вут тăкаççĕ,
Пĕт эс, нимĕç, вĕтĕнсе хутлан.
Фашистсен машинисем çунаççĕ
Çĕр çинче пĕр утмăл та ытла.

— Кур, Гастелло! Эпир, тусăм, саншăн
Çутрăмăр çав çут çуртасене.
Халлĕхе ку пултăр-ха пуçламĕшĕ,
Вĕчĕ кăмăл малалла чĕнет.

Тăкăр бомба! Вирлĕнрех пăрахăр!
Тоннăшарăн тăкăр пĕр тăрук!
Ку вăл халĕ тавăру каçĕ мар-ха,
Ĕмĕр пырĕ хаяр тавăру!

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мĕш номĕргсн пичетленме пуçланă.

Ют çĕршывсенче

ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ИНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН СÿТСЕ-ЯВНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 30-мĕшĕнче общинăсен палатинче Индири лару-тăру çинчен сÿтсе-явнă.

Пренисене Индипе Бирма ĕçĕсен министрĕ Эмери уçнă. Вăл çапла каланă: Индири хальхи лару-тăру вăл пĕтĕмпех Индири наци конгресĕн политикине пула пулнă, ăна пĕр çын — Ганди ертсе пырать. Англичансем вăрçăра темиçе ăнăçсăрлăх тÿснĕ хыççăн, нимĕçсем Александрие çитесси 50 миля кăна юлсассăн, Ганди пĕтĕм вăйне англичансене Индирен кăларса ярас ĕç çине хучĕ. Ганди çапла каларĕ: Англия Индие хÿтĕлеме пултараймасть, Индия Японипе вăрçмасть, Индие ирĕке кăларсан унăн пирвайхи утăмĕ японецсемпе калаçу пуçласа ярасси пулмалла, терĕ. Англичансем Индирен тухса кайччăр текен требовани граждăнсем пăхăнмалла мар кампание пуçласа ярасси çинчен конгресс резолюци йышăннă пирки чăн-чăн хăрушлăх пулса тăчĕ. Ганди каланă тăрăх, çавăнтан пăлхав уççăнах пуçланса каймалла пулнă. Конгресс вара çав пăлхавпа килĕшнĕ.

Эмери каланă тăрăх, Ганди позицийĕнче мĕнле те пулин улшăну пулни палăрмасть. Анчах Инди ыйтăвне татса паман тесе шутлама пулмасть. Эмери Британи правительствин политикине тепĕр хут çирĕплетсе каланă. Вăл политика тăрăх, Индин халăх умĕнче ответлă хăйĕн правительстви тата хăйĕн конституцийĕ пулмалла. Анчах та, тенĕ вăл, конституцин пĕр тĕслĕхĕ кăна пур, Англи конституцийĕ кăна пур тесе шутламалла мар, тенĕ вăл.

Доклад тăрăх пренире палатăн чылай членĕсем тухса каланă.

Юлашкинчен пренире премьер-министр заместителĕ Эттли сăмах тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: Индия май килсенех самоуправлени илме тивĕçлĕ пулнипе палатăра пурте килĕшеççĕ. Анчах çакăнтан ĕнтĕ ертсе пырас ĕç пĕтĕмпех пĕр çын аллинче пулмалла тени, е пĕр-пĕр раса аллинче кăна пулмалла тени тухса тăмасть. Эттли шучĕпе Криппс кăларса тăратнă предложенисем хăйсен вăйне халĕ те çухатман-ха. Инди конституцине тунă чухне Англи конституцине шута илсе тумалла мар, мĕншĕн тесен вăл конституци Индия пек пысăк территори валли юрăхлă мар. Европа континентĕнчен пăхса е США-ран пăхса тунă пĕр-пĕр конституци юрăхлăрах пулмалла. Анчах та йывăрлăх кунта Инди политикĕсем çакăнпа килĕшесшĕн пулманнинче. Вĕсен шучĕпе Англи конституцийĕ шăпах ĕнтĕ Индие юрăхлă конституци пулать иккен. Юлашкинчен Эттли çакна палăртнă: Раджагопалачария, Неру тата Джинна пек Инди деятелĕсем конгреса вăл малтан тытса пынă политика патне таврăнма пулăшма пултарĕччĕç, тенĕ.

ИДЕН ОТТАВĂНА ПЫРСА ÇИТНИ

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден ĕнер Оттавăна (Канада) пырса çитнĕ.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔ ОККУПАНТСЕМ УМĔНЧЕ ПУÇ ТАЙМАСТЬ

СТАМБУЛ, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Грецире Германипе Италие хирĕçле движени ÿссе пырать. Пĕтĕм Грецире вăрттăн листовкăсем саралаççĕ. Вăл листовкăсенче грексене Германие ĕçлеме илсе кайма мобилизаци тунине хирĕç вăйлăн протестлеме чĕннĕ. Афинăри тата Пирейри çуртсен стенисем çинче нумай çĕрте çапла çыра-çыра хураççĕ: «Тĕп пулччăр нимĕçсем!» «Фашистсемшĕн ĕçлеччен пулеметсемпе пенипе вилес!», «Нимĕçсем тăвакан мобилизацие пăрахăçлăр!». Иртнĕ уйăх варринче Афинăра йышлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацие пиншер рабочисем тата Афина университетĕнчи студентсем хутшăннă. Итали войскисем демонстрантсене сапаласа яма хăтланнă пирки хĕçпăшаллă çапăçусем пулса иртнĕ. Çавăнта вилнисемпе аманнисем нумай пулнă.

Афинăрах тата политикăллă забастовка пулса иртнĕ, унта пур предприятисенчи рабочисем те хутшăннă.

ГЕРМАНИН ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИН РАБОТНИКĔСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, темиçе кун каярах Германин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин виçĕ чиновникне вĕлернĕ. Вĕсен ячĕсем паллă мар. Вĕсене «тăшманпа çыхăннă» тесе айăплани çинчен сведенисем пур. Хăшпĕрисем каланă тăрăх, вăл çынсем Гитлера хирĕçле вăрттăн обществăн членĕсем пулнă мĕн. Вăл общество хăйĕн ĕçне анлăн сарсаяни çинчен хыпарсем пур.

300 ПИН НОРВЕЖЕЦА КВИСЛИНГ ГЕРМАНИ КАТОРГИНЕ АСАТАТЬ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Дагенс нюхетер» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Квислинг Германие тата 300 пин çын ямалли çинчен пĕлтернĕ. Çапла тунипе, Квислинг, пĕрремĕшĕнчен, нимĕçсем çине тăрсах Германие ĕç вăйĕ тăратма ыйтнине пурнăçласшăн, иккĕмĕшĕнчен, Норвегири наци ирĕке кăларас движенин чи хастарлă участникĕсенчен хăтăласшăн, тесе çырать хаçат.

НЕАПОЛЬРЕ ПУЛНĂ ВĂЙЛĂ ВЗРЫВ

Римра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: мартăн 28-мĕшĕнче Неапольре боеприпассен склачĕ сирпĕнсе кайнă. Взрыв пулнипе 72 çын вилнĕ, 1.179 çын аманнă. Взрыв пулнин сăлтавĕсене тĕпчесе пĕлме ятарласа уйрăм комисси туса хунă.

КĔСКЕН

* Англин çарĕç министрĕ Григг пĕлтернĕ тăрăх, Британи империйĕнче хальхи вăхăтра тыткăна лекнĕ итальянецсен хисепĕ 274.000 çынна çитет.

* Франци парăначчен Çурçĕр Африкăра ĕçленĕ куйлавлă муниципалитетсем халĕ çĕнĕрен ĕçлеме тытăнаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ГРАЖДАНСЕМ!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне яракан корреспонденцисен адресне тĕрĕс çырăр.

Çырусене, почта карточкисене, переводсене, посылкăсене т. ыт. те ВОЙСКО ЧАÇĔСЕНЕ янă чухне адреса çырмаллине кăтартакан

ПРИМЕРСЕМ:

Адрес çинче ÇАКСЕНЕ КĂНА кăтартмалла: çыру е ытти япала яракан полевой почтăна, ăна илекен çыннăн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне тата яраканнин хăйĕн адресне çырмалла.

Полевая почта 12876-А ИВАНОВУ АЛЕКСАНДРУ НИКОЛАЕВИЧУ	Полевая почта 32574 КОМАНДИРУ ЧАСТИ
Обратный адрес: Благовещенка, Саратовской обл. Самойловского района, Иванова А. И.	Обратный адрес: Москва 55, Сущевский вал 14, кв. 5 Соловьева А. Н.

Адреса кăтартнă цифрăсене ОБЯЗАТЕЛЬНО çакăнта кăтартнă пек çырмалла: конверт е почта карточкин варрине—ПОЛЕВАЯ ПОЧТА тесе çырнин айне çырмалла.

ÇАКСЕНЕ АСĂРХĂР!

Войско чаçĕсене ямалли адрессем çинче çаксем çинчен çырма ЮРАМАСТЬ:
1. Часть е полевой почта вырнаçнă хула, ял, станци е халăх пурăнакан пунктăн ятне.
2. Войско чаçĕпе соединенин чăн-чăн ятне.
3. Военнослужащин çар званине тата мĕнле войскăра тăнине, сăмахран: летчика, сапера, танкиста, стрелока, пулеметчика т. ыт. те тесе.

Тылра тăракан çар учрежденийĕсемпе заведенийĕсене çыракан адрессем çинче (военкомат, шкул, госпиталь т. ыт. те) вĕсен ячĕсене тата вĕсем ăçта тăнине (хула, ял) кăтартса çырма юрать.

ПРИМЕРСЕМ:

СЫЗРАНЬ Куйбышевской обл., ул. 1-го Мая, 25, госпиталь, палата 19.	САРАТОВ 1-ое пехотное училище НАЧАЛЬНИКУ УЧЕБНОГО ОТДЕЛА
Обратный адрес: Москва 9, ул. Горького 5, кв. 45, Петрова М. Я.	Обратный адрес: Бугуруслан Чкаловской обл., колхоз им. Ленина Сидорова С. М.

АДРЕССЕНЕ ТĔРĔС ÇЫРĂР: адрессене тĕрĕс çырни Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕнчи военнослужащисем корреспонденцисене илессине хăвăртлатать.

ССР СОЮЗĔН ÇЫХĂНУ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ.

Сар сыннисен çемьисене пулăшаççĕ

ÇАР ÇЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

КÿКЕÇ. Платкари «Хĕрлĕ ялав» колхоз çар çыннисен çемьисене пулăшма 15 центнер тырă панă, 20 çемьене ытла сысна çурисем туянтарнă.

Çавăн пекех красноармеецсен арăмĕсене тĕрлĕ ĕçсене вырнаçтарнă. Сăмахран, Седовăпа Татьяна Азековăна фермăна ĕнесем пăхма, Мария Андреевăна — сурăхсем пăхма, Е. Кирилловăна — конюха кĕртнĕ.

Н. Мышкин.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательсен контори—0—23.

НТ 667 Типография № 1. Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.